❑ ВИТАЛИЙ РОДИОНОВ





# ЧĂВАШ НАЦИ ĂНĔН АТАЛАНĂВĔ (XX. ĔМĔР ПУÇЛАМĂШĔ)

**Тĕп шухăш:** XX ĕмĕр пуçламăшĕнче Иван Яковлевăн çутлăх программи чăваш интеллигенцийĕн тĕп пайне çырлахтармасть ĕнтĕ. Нацин çĕнĕ идейине чăмăртакансен пуçне ун чухне çамрăк тĕпчевçĕ тата публицист – Николай Никольский – тухса тăрать. Вăл пуçарнипе ял хуçалăхĕ, çĕр ĕçĕ, географи, медицина ыйтăвĕсемпе чăвашла вăтăр ытла кĕнеке кун çути курать, халăх сăмахлăхĕпе илемлĕ литература хайлавĕсем пичетленеççĕ. Чăваш тĕпчевçи хăйĕн ĕçĕсенче чăваш хушшинчи ĕçсене тăван халăх çыннисенех туса пымаллине ĕнентерсе çирĕплетет, Атăлçи халăхĕсен ушкăнне чăмăртама хал çитерет. Вăл наци ĕçне политика ыйтăвĕсемсĕрех ăнăçлăн татса пама май пуррине кăтартса ĕнентерет. Гурий Комиссаров та чăвашлăх ĕçĕнче тĕп туртарах пырать. Гуманитари ăслăлăхне кӳлĕнсе вăл чăваш халăхĕ пуян чун-чĕреллĕ те аваллăхлă пулнине, унăн иртнипе хальхи кăна мар, пуласлăхĕ те пуррине ĕненмелле кăтартса парать. Çак ыйтусене хускатса вăл 1917 çулта «Чăваш халăхĕ малалла кайĕ-ши, каймĕ-ши?» ятлă публицистикăлла хайлав-тĕпчев шăрçалать, Ирĕклĕх çулĕпе утакан чăвашсен чĕрисенче шанăç вучĕ чĕртме пултарать. Николай Никольский пуçарнă ĕçе истори ăслăлăхĕнче Турхан Энтрийĕ, литература пĕлĕвĕнче Илле Тăхти малалла аталантараççĕ. 1917 çулта «Хыпар» хаçат çĕнĕрен кун çути курать, вăл пĕтĕм чăваша чăмăртас ĕçе пуçăнать, халăха вĕренӳ идейипе пĕрлештерме тытăнать. Наци юхăмĕн пĕрлĕхĕ Раççейри Аслă Пухăва суйланă чухне питĕ лайăх палăрать: чăваш халăхĕн списокĕпе харăсах тăватă çын суйланма пултарать. Юпа уйăхĕнчи пăлхавăр хыççăн çав ирĕклĕхпе пĕр танлăх юхăмĕ большевиксен хирĕçле ĕçĕсене пула ерипен хавшама пуçлать. Политикăри пăтрашусем çыравçăсене те ушкăнласа яраççĕ, Яковлев шкулĕнче çирĕпленсе çитнĕ литература чĕлхине тĕн тата чиркӳ чĕлхи вырăнне антарса лартма пуçлаççĕ.

**Тĕп сăмахсем:** чăваш халăхĕ, наци ăнĕ, Раççейри пăлхавăрсем, литература чĕлхи, тĕн.

**Çuvaş Ulus Bilincinin Gelişimi (XX. Yüzyıl Başı)**

XX. yüzyıl başında İvan Yakovlev'in aydınlanma programı Çuvaş entellektüelizminin ana kesimini memnun etmez. Ulusun yeni ideolojisini tesis edenlerin başına o dönem, genç araştırmacı ve gazeteci Nikolay Nikolskiy gelir. Onun harekete geçirmesi ile ziraat, tarım, coğrafya ve tıp

konularında Çuvaşça otuzdan fazla kitap basılır, halk edebiyatı ile estetik edebiyat eserleri yayımlanır. Çuvaş araştırmacı, çalışmalarında, Çuvaşlar arasındaki faaliyetleri kendi halkından insanların gerçekleştirmesi gerektiğine insanları ikna edip bu düşünceyi pekiştirir. İdil'deki halkların birliğini tesis etmek için çaba harcar. O, ulus meselesini politik sorunlardan sıyırarak başarıyla çözmenin mümkün olduğunu gösterip insanları buna inandırır. Guriy Komissorov da "Çuvaşlık" meselesinde temel bir rol oynar. Beşeri bilimlerle uğraşıp Çuvaş halkının yüce gönüllü ve kadim bir halk olduğunu, yalnızca geçmişinin ve bugünün değil bir geleceğinin de olacağına inanması gerektiğini ifade eder. 1917 yılında bu sorunlara değindiği «Чăваш халăхĕ малалла кайĕ-ши, каймĕ-ши?» ["Çuvaş halkı ilerleyecek mi, ilerlemeyecek mi?] adlı toplumsal çalışma-araştırmayı kaleme alır. Özgürlük yolundan giden Çuvaşların gönüllerinde inanç ateşi yakmayı başarırır. Nikolay Nikolskiy'in başlattığı faaliyeti tarih alanında Turhan Entriyi, edebiyat alanında İlle Tıhti ileriye taşırlar. 1917 yılında "Hıpar" gazetesi yeniden yayınlanmaya başlar. Gazete tamamen, Çuvaşları organize etme işine girişir ve halkı eğitim ile bir araya getirmeye başlar. Ulus akımının birlikteliği, Rusya'daki Büyük Kongereye seçildikleri zaman çok iyi bir şekilde ortaya çıkar: Katılımcı listesine Çuvaş halkından dört kişinin birden seçilmesi mümkün olur. Ekim ayındaki karışıklığın ardından söz konusu özgürlük ve eşitlik akımı Bolşevikler'in olumsuz faaliyetleri nedeniyle yavaş yavaş silinmeye başlar. Politikadaki karışıklıklar yazarları da kamplara böler. Yakovlev okulunda sağlam bir temele oturtulan edebiyat dilini, bir din ve kilise dili seviyesinde görüp tenzile başlarlar.

**Anahtar Kelimeler**: Çuvaş halkı, Ulus bilinci, Rusya'daki Karışıklıklar, Edebiyat Dili, Din.

## The Development of Chuvash National Consciousness (Early 20th Century)

The enlightenment program of İvan Yakovlev in the early 20th century does not satisfy the main section of Chuvash intellectualisms. In that period, Nikolay Nikolskiy, a young researcher and journalist, becomes the head of the nation's new ideology constituters. With his encouragement, more than thirty books in Chuvash language on the subjects of agriculture, cultivation, geography and medicine are published, folk and aesthetic literature works are also printed. In his works, the Chuvash researcher convinces people that activities among Chuvash people should be carried out by people from his own nation and reinforces this idea. He puts an effort to establish the unity of nations in İdil. He demonstrates that it is possible to solve the nation problem successfully by removing it from its political problems and makes people believe this. Guriy Komissorov also plays an important role in the matter of "Chuvashness". He works in the humanities field and states that Chuvash people are greathearted and ancient nation and they should believe that they are going to have not only a past and present, but also a future. He writes the social study-research titled as "Чăваш халăхĕ малалла кайĕ-ши, каймĕ-ши?" ["Will the Chuvash people advance or not?"] in 1917 and mentions those issues. He manages to set a fire of faith in the hearth of Chuvash people who follow the path of freedom. The activity initiated by Nikolay Nikolskiy is advanced further by Turhan Entriri in the field of history and İlle Tıhti in the field of literature. The newspaper "Hıpar" is republished in 1917. The newspaper entirely takes up the task of organizing Chuvash people and begins uniting people with education. The unification of national movement emerges very well when they are elected the Great Congress in Russia: it becomes possible for four people from Chuvash nation to be selected to the participant list. After the turmoil in October, the previously mentioned movement of freedom and equality begin to be gradually diminished due to the negative activities of Bolsheviks. The turmoil in politics divides authors into camps. They begin demeaning the literary language, which was placed on a solid foundation in Yakovlev's school, and consider it in the same level with a religion and church language.

**Keywords:** Chuvash people, National consciousness, Turmoil in Russia, Literary language, Religion.

Чăваш халăхĕн иртнĕ пурнăçĕнчи пысăк улшăнусене виçĕ паллă ĕçпе çыхăнтарса пăхма пулать: чăваш тăрăхĕ Раççейĕн пĕр пайĕ пулса тăнипе (1551), чăваш çынни православи чиркĕвĕн тĕнне куçнипе (XVIII ĕмĕрĕн 40-мĕш çулĕсем) тата Раççейре патша йĕркине пăрахăçа кăларнипе (1917). Ку статьяра эпир, тĕпрен илсен, юлашки паллă пулăмпа çыхăннă ĕç-пуç пирки калаçăпăр.

XIV ĕмĕрте пăлхарсем (ун чухне вĕсем хăйсене *пӳлер* тенĕ пулас) тĕн енчен икĕ ушкăна пайланса каяççĕ: *пĕсĕрменсем* (мăсăльмансем) тата *çăваçсем* (халăх тĕнне уякансем, каярах тутар чĕлхин витĕмĕпе *чăваш* тесе калама пуçлаççĕ). Пĕрремĕшĕсен ытларах пайĕ хуласенче тӳре-шарапа тĕн тата ытти хула ĕçĕпе, иккĕмĕшĕсем вара ялсенче çĕр ĕçĕпе тăрмашса, чӳксем ирттерсе тата киреметсене упраса пурăннă (Родионов 2017: 254-266).

XVI-XVII ĕмĕрсенче чăваш халăхĕн традицилле сăнĕ-сăпачĕ (культурипе йăли-йĕрки), унăн этнографи ушкăнĕсем (анат енчисемпе анатрисем тата турисем), этнотерриторийĕ çирĕпленсе çитеççĕ. Ку тапхăрти наци ăнĕ чĕлхепе культурăран ытларах тĕнпе (*çăв чăваш* тĕнĕпе) тачă çыхăннă (тĕнне улăштарнă чăваш чĕлхипе çи-пуçне те, йăлисене те улăштарнă). Мăсăльмана куçнисем *тутар*, православие куçнисем *крешĕн* (вырăсла *крещенный* сăмахран) пулса тăнă. Ун чухне чăваш кашни халăха Турă хăйне уйрăм тĕн уйăрса панă тесе ĕненнĕ, хăйне унăн ывăлĕ тесе шухăшланă.

XVIII ĕмĕр варринчен пуçласа чăвашсен тĕп пайĕ хăйне православи çынни тесе хисеплеме тытăнать, хăйне Турă чури вырăнне лартса турăшсене пуççапма пуçăнать. Çĕнĕ тĕне вырăссемпе кӳршĕллĕ ытти халăхсем те уянăран чăваш хăйне ыттисенчен чи малтан чĕлхепе культурăна кура уйăрса пăхма тытăнать. Турри те патша пекех пĕрре кăна тет вăл («Çӳлте Турă, çĕрте патша»). Патша вара çĕр çинчи халăхсене тытса та пăхса пурăнать иккен.

XX ĕмĕр пуçламăшĕ тĕлне чăваш халăхĕ хăйĕн вĕреннĕ çыннисемлĕ (интеллигенцийĕллĕ), кĕнекиллĕ (малтанхи тапхăрсенче чăвашăн кĕнекине «ĕне çинĕ» тенĕ, çапла калани «кĕнекесем вăрçă-харçă вутĕнче çунса кайнă» тенине пĕлтернĕ), шкуллă халăх пулса тăрать. Унăн вĕреннĕ ачисем Турăпа патша çинчен мар, хура халăх пурăнăçĕ, тăван халăхăмăр шăпи, аваллăхĕпе паянхи тата пуласлăхĕ пирки шухăшлаççĕ. Çапларах çĕнĕ шухăш йĕркеленнине тутарсем *инкыйраз*, чăвашсем вара *çухалу хăрушлăхĕ* тесе палăртаççĕ.

1917 çулта чăвашсен наци ăнĕ тата çĕнĕ шая çĕкленет. Интеллигенци патшапа Турра та сивлет ĕнтĕ. Вăл халăха хăй еплерех пурăнас тенĕ пек пурăнма вăхăт çитни çинчен пĕлтерет, чăвашсене хăйсемшĕн тăрăшакан çынсемшĕн хытă тăма йыхăрать. «Чăвашсем! Пĕрлешсе ĕçлеме тытăнăр!» йышши чĕнӳсем «Хыпар» хаçатра тăтăшах курăнма пуçлаççĕ. Шел пулин те, килĕштерсе ĕçлесси шалти вăйсемпе туртăмсенчен кăна мар, тулашри сăлтавсенчен (Раççейри политика лару-тăрăвĕнчен) те чылай килнĕ. Çакна 1917-1918 çулсенчи ĕçсем аван кăтартса параççĕ. Çав пулăма тĕплĕнрех ăнланас тесен маларах пулса иртнисене пĕлни те кирлĕ.

Юман Мĕтри хăйĕн «1905 çул» ятлă аса илĕвĕнче (1925) Яковлев ӳстернĕ интеллигенци аслă çутлăхçăн (просветителĕн) программинчен иртсе кайни, «ун туртинчен тухса урăх çулсем шырама тытăнни» çинчен каланă: «Çав интеллигенци хушшинче тĕрлĕ туртăмсем курăна пуçлаççĕ: пĕрисем

революци еннелле сулăнаççĕ, теприсем наци культурине тăвас ĕç çине çеç тĕренсе унтан иртеймеççĕ» (Юман, 1997: 379). Юман хаклавĕнче тенденцилле шухăш сисĕнсен те вăл XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи лару-тăрăва тĕрĕс кăтартса парать. Чăваш хушшинче социаллă парттисенче тăракан çынсем ун чухне çителĕклех пулнă. Тепĕр, сылтăм çуначĕ тесе Юман буржуаллă демократи енне туртăнакан юхăма калать, вĕсен ретне Н.В.Никольские, О.Г.Романова, В.И.Кривова тата ытти нумай вĕрентекене, земствăра ĕçлесе пурăнакан, хуласенче патшалăх вырăнĕсенче тăракан чăвашсене кĕртет. Юман çак икĕ хире хирĕçле юхăмсăр пуçне чăвашсен хушшинче «тĕрлĕ националлă юхăмсем» палăрни çинчен те калать. Вĕсем шкул ĕçне, кĕнеке кăларас ĕçе малалла ярас тесе çанă тавăрсах тăрăшаççĕ, халăх историйĕпе кăсăкланаççĕ, чăваш шкулĕнче чăваш учителĕ ĕçлетĕр, чăвашăн хăйĕн архиерейĕ пултăр теççĕ. Çак юхăм (Юман ăна *наци оппозицийĕн çыранĕ* тесе палăртать) патшасен пусмăрлă йĕркипе те килĕшмест, вĕсене хирĕç вăйпа кĕрешӳ тапратма чарăнса тăрса патша вăхăтĕнчех чăваш культурине епле те пулсан малалла ямалли мелсем шырать.

Юман палăртнă юхăмсем, хăй каланă тăрăх, чăвашăн вăл е ку «класлă сийĕн сунавĕсене» палăртнă: социализм енне туртăнакан юхăм хыçĕнче чухăнпа вăтам хресченсем, бурлакланнă ял çыннисем, унтан пурнăçĕпе пролетариата çывăх чăваш интеллигенчĕсем тăнă; либерализмпа буржуаллă демократи енне пирĕн аталанакан вак буржуази сулăннă; Иван Яковлев тата националистсен çулĕ çине ялти пуянсем, пупсем, нумай вĕрентекенсем, нумай тĕттĕм хресчен пусса тăнă (Юман 1997: 382-385).

Юманăн çак ушкăнлăвĕ чылай хирĕçӳллĕ. Калăпăр, патшан пусмăрлă йĕркипе килĕшмен, тăван культурăна малалла яма тăрăшакансене националист (тен, автор ăна *патриот* пĕлтерĕшĕпе усă курнă?) тесе хаклани ăнăçсăр. Наци оппозицине социалистсем те, буржуаллă демократсен ретне лартнă чăвашсем те кĕни паллă. Эппин, ушкăнлу виçисене социаллă сийсене тĕпе хурса мар, урăххи çине тĕревлесе палăртмалла. Анлăрах куçпа пăхсассăн тĕп кĕрешӳ яланах икĕ вăй хушшинче пынă: халăх чăмăртанăвĕн, аталанăвĕн мехелĕ тата ăна чăрмантарса, чарса пыраканĕсем. Яковлев чăваша шкулсемпе кĕнекесем парса, çĕнĕ интеллигенци çитĕнтерсе вăхăта хăваласа çитме пулăшнă. XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи Раççей техникăпа ăслăлăх ĕмĕрне çирĕппĕн кĕрет. Ку вăхăтра мала тĕн ĕçĕ мар, вĕренӳпе пĕлӳ ĕçĕ тухать; халăха пупсенчен ытларах вĕрентекенсемпе ял хуçалăх ăстисем, юристсемпе инженерсем, тĕрлĕ ăслăлăхçăсем кирлĕ пулни курăнса каять. Çак наци идейине чăмăртакан юхăм пуçне ĕмĕр пуçламăшĕнче Николай Васильевич Никольский (1878-1961) тăрать. 1903-1917 çулсенче вăл Хусанти куçару ушкăнĕнчи чăваш секцине ертсе пырать. Çав çулсенче секци сĕннипе 30 ытла чăвашла кĕнеке тухать, вĕсенче выльăх-чĕрлĕх, çĕр ĕçĕсем, медицина, географи, ачасене вĕрентес ыйтусем çинчен çырнă, халăх сăмахлăхĕпе илемлĕ литература тексчĕсем те пичетленнĕ. 1906-1914 çулсенче Н.В.Никольский çулсерен «Çулталăк кĕнеки» пухса кăларать. Хусан вĕренӳ округĕн управленийĕ çумĕнчи куçару комиссийĕнче ĕçленĕ хушăра вăл 6 кĕнеке редакцилесе кăларать, çав шутрах Н.И.Ашмарин сăмахсарĕн («Чăваш сăмахĕсен пуххин») чи малтанхи кăларăмне те. 1910-1911 çулсенче Никольский вырăсла-чăвашла тата славянла-чăвашла сăмахсарсем пичетлесе кăларма пултарать. Вăл шкул чĕлхи пирки пыракан тавсене хутшăнса яланах тăван чĕлхемĕрпе культурăмăра хӳтĕлеме, тĕрлĕ шовинистсен çăварĕсене хупласа лартма тăрăшнă (Родионов 2008: 8).

1911 çулта Хусанти дворянсен пухăвĕнче çапларах йышăнусем тăваççĕ: 1. Вырăс мар халăхсен хушшинче ĕçлекен шкулсенче вĕрентме вырăссене кăна илмелле. 2. Чиркӳсенче те вырăс çыннисем кăна ĕçлемелле. Вырăс халăхĕ кăна тĕрĕс вĕрентме пултарĕ вырăс мар çынсене, лешсен вĕреннĕ

çыннисем час-часах вырăс культурипе патшалăхлăхне хирĕç тăраççĕ, тенĕ çав пухура. Пĕри вара вырăс мар халăхсене «этнографилле анахронизм» тесе хак панă.

Çакăн пек лару-тăрура вырăс мар халăхсен интеллигенцине ăслăлăх çине тĕревленнĕ, шовинистсене шăплантарма пултаракан ĕненterÿсем кирлĕ пулнă. Кĕçех Николай Никольский «Христианство среди чуваш Среднего Поволжья в XVII-XVIII веках» ятлă пысăк тĕпчев ĕçĕ (Хусан 1912) çырса пичетлет. Унта вăл чăваш хушшинчи ĕçсене (чиркÿ е шкул тавращĕсенчи-и вăл) *«чăвашла лайăх пĕлекенсен»* туса пымалла текен шухăша çирĕплетет. Ку ĕнтĕ чăваш хушшинче чăваш интеллигенцийĕн ĕçлемелле тенине пĕлтернĕ. Çапла майпа наци идейин тĕп паллисем çирĕпленсе пыраççĕ. Çакна православи тĕнне уякан ытти халăхсен (çармăссен, арсен (удмуртсен), ирçесемпе мăкшăсен) интеллигенцийĕ хăвăрт туйса ăнланнă. 1917 çулхи нарăс уйăхĕнче патшана сирпĕтсен вĕсем чи малтан Н.В.Никольский тавра чăмăртанаççĕ (Родионов 1997: 8-9).

Атăлçи халăхĕсене пĕрлештерес тĕллевпе Н.В. Никольский (ун чухне вăл Хусан университечĕн приват-доцентĕнче ĕçленĕ) 1917 çулхи пуш уйăхĕн варринче çак хулара ĕçлекен, вĕренекен, çар гарнизонĕнче службăра тăракан чăвашсене, çармăссемпе арсене, комисемпе крешĕн тутарсене, мăкшă-ирçесене пĕрлешÿллĕ пухăва чĕнет. Çав пухăва пуçтарăннисем пĕр-пĕринпе канашласа-килĕшсе «Атăлçи вак халăхĕсен ушкăнне» («Общество мелких народностей Поволжья») йĕркелеççĕ, правлени пуçлăхне чăваш ăсчахне лартаççĕ. Çапла вара, вырăс мар халăхсене хÿтĕлекенсен, вĕсене вăхăт ыйтнă пек аталанма пулăшакансен ушкăнĕ йĕркеленет, каярах вăл хăйĕн ларăвĕсенче политика ыйтăвĕсене те хăюллăн хускатма пултарать.

Н. Никольский ертсе пыракан наци чăмăртанăвĕн юхăмне чылай чухне социал-революционерсем (Юман палăртнă социалистсен юхăмĕ) чăрмантарса пынă, вĕсен ырă пуçарăвĕсене хăйсен чарусăрлăхĕпе чăрсăрлăхне пула пăчлантарса лартнă. Çакна Н. Никольскин чăвашла хаçат кăларас ĕçĕнчи лару-тăру аван кăтартса парать. Хаçатăн программи либераллă туртăмлă пулнă. Редактор влаçа хирĕçле шухăшсенчен асăрханнă, ăна хупса хурасран шикленнĕ. Çав хушăрах вăл халăх пурнăçне çăмăллатма кирли çинчен те çырать. Хресченсен çĕр хĕсĕк, вĕсене çĕр касса памалла, çĕнĕ çĕрсене куçармалла, тет вăл. Пурнăçа лайăхлатас тесессĕн хут вĕренсе пĕлÿ илмелле. Ялсенче ал ĕçĕн (ремесло) шкулĕсем уçмалла, тесе çырать вăл хăйĕн тĕрлĕ статйинче.

1906 çулхи çурла уйăхĕн 1-2-мĕшĕсенче Чĕмпĕр çывăхĕнчи пĕр уçланкăра чăваш çамрăк интеллигенцийĕн «Чăвашсене вĕренме пулăшакан союз» ятлă ушкăнĕн срезчĕ вăрттăн иртет. Унта пухăннисем халăхăн политикăлла ăнланулăхне еплерех ÿстермелли çинчен калаçаççĕ, «Хыпар» хаçата хăйсен аллине илме палăртаççĕ. Семен Игнатьев редактор пулса тăрсан хаçатра революци шухăшлă статьясем ытларах та ытларах пичетленме пуçлаççĕ. Никольский асăрхаттарни чăна килет: 1907 çулхи çĕртме уйăхĕн 6-мĕшĕнче «Хыпар» хаçата хупаççĕ. Унта ĕçленĕ Тайăр Тимккине виçĕ çуллăха пуçиле (ссылкăна) яраççĕ. Кĕçех реакци вăхăчĕ çитет. Вырăс шовинисчĕсем Яковлевпа Никольский ертсе пыракан юхăм ĕçĕсене хытах тапăнма пуçлаççĕ. Çак лару-тăрура халăх чăмăртанăвĕн, культурăмăр аталанăвĕн идейи каллех малти вырăна тухса тăрать. Самарта çав пархатарлă ĕçе Даниил Филимонов, Ĕпхÿре Гурий Комиссаров (Вантер) кÿлĕнеççĕ, чăваш ĕçне официаллă влаçа хирĕç каймасăрах туса пыма пултараççĕ.1906 çулхи чÿкĕн 6-мĕшĕнче Даниил Филимонов Никольский патне çыру ярать, унта вăл хăйĕн ÿсĕмĕ Яковлев ертсе пынипе 30 çул ытла чăваш культурине аталантарни, политикăран аяккарах тăма тăрăшни çинчен çырать. Паянхи

интеллигенцин тĕллевĕсем анлăрах пулнине йышăннă хушăрах вăл çамрăксене социализм идейисемпе ытлашши айхашаççĕ, тесе ӳпкелет. Çакă вĕсенччен тăрăшса тунă ĕçсене харама ярать иккен. Чăвашсене пĕрлештерес, чăмăртас тĕллевпе пĕтĕм чăвашсен пухăвне ирттермелли çинчен çырать вăл. Çав хушăрах хура халăхăн наци туйăмне аталантарасси пирки те шухăшлать вăл, «вырăс пулас», «тутар пулас» тесе калакансем чăвашра ан пулччăр тет (Родионов 1997: 10). Гурий Комиссаров (Вантер, 1883-1969) Хусанти тĕн академийĕнче вĕреннĕ хушăрах «Чуваши Казанского Заволжья» ятлă пысăк тĕпчев ĕçĕ çырса пичетлет (1911), Ĕпхӳре «Чувашский «саламальник» ятлă тĕпчев брошюри (1914), «Смысл мировой истории» ятлă философи трактачĕ (1916) кăларать. 1917 çулхи ака уйăхĕнче вăл ертсе пынипе «Ĕпхӳри Чăваш Халăхĕн Ушкăнĕ» йĕркеленет. Ĕренпур (Оренбург) вĕренӳ округĕнчи тата Ĕпхӳ кĕпĕрнинчи вĕрентекенсен пухăвне çак ушкăн П.Миронова тата Г.Комиссарова ярать. Вĕсем унта чăваш халăхĕ ячĕпе тухса калаççĕ, Ĕпхӳре чăваш вĕрентекенĕсен семинарине уçма ыйтаççĕ.

1917 çулта Г.Комиссаров «Чăваш халăхĕ малалла кайĕ-ши, каймĕ-ши?» ятлă ĕç çырать, ăна «Ĕпхӳри Чăваш Халăхĕн Ушкăнĕ» 1918 çулта пичетлесе кăларать. Çыравçă шухăшĕпе, чăвашăн малалли пурăнăçĕ илемлĕ те чаплă пулмалла. Чăвашсем çĕнĕ Раççейре ытти халăхсемпе пĕр тан пулĕç: Пĕтĕм Раççей Пуххинче ларĕç, чăваш хушшинчи ĕçсене чăваш суйланă çынсем туса тăрĕç, суд таврашне чăвашла тăвĕç; чăвашăн тĕп хысни, тĕп тăвамĕ (правительстви) пулĕ, чăвашăн яланах хаçатсем, журналсем, кĕнекесем тухса тăрĕç, кĕнекесем çаптармалли хатĕрсем пулĕç, асăнмалли чăваш япалисен пуххисем (музейсем), кĕнеке çурчĕсем (библиотекăсем) пулĕç; пухусем пуçтармалли, хаçатсем кăлармалли, чăваша çырăва, ăс-тăна вĕрентмелли, каласа кăтартмалли (лекци тумалли), кăтартмасем (спектакльсем) лартмалли чăваш çурчĕсем пулĕç; чăваша çĕр хушса парĕç; сапаланнă чăвашсем пĕр вырăнарах пуçтарăнĕç; чăвашсем хăйсен ячĕшĕн, пĕтĕм чăваш халăхĕшĕн ытларах тăрăшакан пулĕç. Чăваш хушшинче тĕслĕрен ĕçе вĕренмелли шкулсем лартĕç, чăваш тĕрлĕ ăсталăха вĕренĕ; çĕртен нумай усă илме вĕренĕ. Чăвашран чаплă сăвăçсем, кĕнекеçĕсем тухĕç; композиторсем (юрламаллисене çыракансем), музыка ăстисем, сăн çыракансем, сăн ӳкерекенсем, халап ăстисем (ораторсем) тухса чапланĕç. Чăвашсем пĕрлешсе халăхпа таварсем тума, тырă-пулă тума, выльăх-чĕрлĕх усрама, суту-илӳ тума тапратĕç, Вĕсем апат-çимĕç лайăхрах çийĕç, кĕлеткене тĕреклĕрех усрĕç, ачи-пăчисене авантарах пăхса çитĕнтерĕç; чир-чĕрпе кĕрешмешкĕн ытларах эмелсем тăвĕç, эмеллемелли çуртсем лартĕç; кил-çурта аслăрах лартса тасарах тытса усрĕç; эрех-сăра ĕçсе çӳрес, чĕлĕм туртас вырăнне халăх çурчĕсене чуна тăрантаракан япалана илтсе курма çӳрĕç (Комиссаров 2014: 45-46). Чăннипех те сăвăлла прозăн янăрать çак хайлав. Унта çыравçăн шанчăкĕпе чун хавалĕ тапса тăни сисĕнет, унта халăхăмăрăн мал ĕмĕчĕ палăрать.

Ĕпхӳре Г.Комиссаровпа пĕрле Илле Тăхти çыравçă та чăваш ĕçĕшĕн çуннă, çар гарнизонĕнчи чăвашсене пухса патша тытăмĕ пĕтни, халăхăмăрăн чăмăртанма кирли çинчен ăнлантарса пысăк ĕç тунă.1917 çулхи раштавăн 10-мĕшĕнче Хусанти чăваш вĕренекенĕсен ушкăнĕн пухăвĕ пулнă. Унта Хусана тăрăхĕнчи чăваш çар çыннисен пухăвне килнĕ чăваш салтакĕсем те пынă, пурĕ пĕр 300 çынна яхăн пуханнă. Çак пухура Илле Тăхти «Чăваш литературин историйĕ» çинчен каланине итленĕ. Унта вăл çырулла сăмахлăх халăхăн мĕн пур чаплăхне кăтартни, Этемĕн ăс-шухăшĕ, чĕре, чун вăйĕ çакăнта ӳкни, халăхăн хăй тĕллĕн пурăнма пултарни, пурăнăç хăвачĕ пĕтĕмпех унта ӳкерĕнни пирки каланă. Хăйĕн сăмахне вăл халăхăмăра чăваш чĕлхи, чăваш аваллăхĕ, тăван литература ячĕпе пĕрлешме чĕннипе вĕçленĕ. Илле Тăхти чĕнсе каланă сăмахсене каярах Çеçпĕл Мишши «Чăваш чĕлхи ячĕпе пурте пĕр пулар» тесе тепĕр хут каланă (1921 çулхи пуш уйăхĕн 22-

мĕшĕнче Васанкка патне янă çырура). Ку ĕнтĕ тăван сăмахăмăр, сăмахлăхăмăр ячĕпе пĕрлешме йыхăрнинех пĕлтернĕ (Çеçпĕл 1989:).

Чăваш историйĕ ячĕпе пĕр пулма чĕнесси интеллигенци хушшинче Н.И.Ашмаринăн «Пăлхарсемпе чăвашсем» ятлă ăслăлăх ĕçĕ пичетленсе тухсан (Хусан, 1902) пуçланнă. Н.В. Никольский, Г.И.Комиссаров тата вĕсем хыççăн туртăнакан ытти чăваш арĕсем халăхăмăр аваллăхне тĕпчеççĕ, унăн тымарĕсене шыраççĕ. Чăваш халăхĕн историне çырма Турхан Энтри 1915 çултах пуçăнать, ăна вăл тепĕр икĕ çултан «Хыпар» хаçатра пичетлесе кăларать.

Э.Турханăн «Чăваш историйĕ» çапла пайсенчен тăрать: Умĕнхи сăмах. Чăвашăн авалхи ячĕ. Атăл вилсен. Дунай пăлхарĕсем. Пăлхар хулисем. Пăлхар тĕнĕ. Пăлхарсемпе вырăссем. Тутарсем килсен. Хусан патшалăхĕ. Вырăс аллинче. Кунта чăвашăн виçĕ пине яхăн авалрах пулса иртнисене, халăхăмăр историне çырса кăтартнă. Мĕн пурĕ чăвашăн харкам ăнне вăратассишĕн, наци туйăмне хускатассишĕн çырăннă çав хайлав. Автор типĕ чĕлхеллĕ хронист мар, вĕри чĕреллĕ, халăх шăпи çинчен шухăщласа чунне ыраттаракан, ăна чунтан-вартан савакан публицист. Çакна уйрăмах «Хусан патшалăхĕ» пайра аван туйса илме пулать. Вырăссемпе тутарсен хушшинче тăнă чăваш халăхне мĕн тери йывăр килнине ăнлантарас тĕллевпе автор риторика мелĕсемпе усă курать. Унта çыравçă чăваш пек тертлĕ халăх пулман пуль тĕнчере, тесе тĕлĕнет, чăваш халăхĕ тăшманĕсем усалтан çапла начара юлни пирки çырать. Сирĕнтен хăраса ĕлĕкхи хавас, суту-илӳ тума, тĕрлĕ халăхсемпе курнăçса калаçма юратакан чăваш вăрмана пытанса упа пек пурăннă, тесе пĕтĕмлетет çыравçă. Вăл халăхра тĕл пулакан хыткукарлăха та, чĕмсĕрлĕхе те, йăпăлтатулăха та çав пусмăр вăхăчĕпе çыхăнтарса ăнлантарать. Çак ĕлĕкхи сехĕрленӳллĕ вăхăтра чăвашсем вăйран хăраса, вăйлисене йăпăлтатса хисеплеме вĕреннĕ иккен. Вăйлă мар çынна, тăван пулсан та, нимĕн вырăнне хумасăр, унран тăрăхласа кулма, ăна тертлентерме вĕреннĕ. Çапла туса чăвашсен ватă аслашшĕсем хăйсен пуçне касасран хăтăлнă.

Очеркри калу хальхи вăхăта куçать, кунта XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи пурнăç варкăшĕ аванах сисĕнет: «Çавăнтах халĕ те чăваш ялĕсенче вырăс пупсем, вырăс вĕрентекенĕсем ырă курса кăна пурăнаççĕ. Чăваш вĕрентекенĕсене чăвашсемех тĕрлĕ майпа мăшкăлаççĕ, кӳрентереççĕ, ялтан хăваласа кăлараççĕ» (Турхан).

Чăваша хурлаканĕсем, «эсир» текенĕсем чăваш хушшинче ырă курса пурăнакансемех иккен. Калуçă вĕсене куçран чăр! пăхса çапла хăюллăн калать: «Çук, чăваша юратман çынсем! Авал чăваш апла та, капла та пулман! Ăна сирĕн пек чăваша курайман çынсем тертленсе, çапла кайăк чĕреллĕ хăравçа, хура чĕреллĕ кăлăхсăра кăларнă. Ку чăвашăн айăпĕ мар. Ку сирĕн айăп вăл, чăвашăн тăшманĕсем!»(Турхан) Хайлава Турхан Энтри кĕлĕ сăмахĕсемпе вĕçлет. унта вăл турăран чăваш халăхне ĕмĕр усрама, ирĕк саманара савăнăç кăтартма, ытти халăхсем хушшинче йăлтах тăкăнкаласа пĕтесрен хăтарса хăварма ыйтать.

Çапла вара, наци юхăмĕн йышĕнче унăн ертӳçипе (Н.В.Никольскипе) харăсах ытти хастар чăвашсем те хăйсен сассисене панă. 1917 çулта çак юхăм пĕр тапхăр социалистсене те хăйне май çавăрать. Çав хушăрах эсерсен витĕмне пула «Хыпар» хаçатăн девизне «Пĕтĕм чăваш хаçачĕ» мар, «Хура халăх хаçачĕ» тесе çырма йышăнаççĕ. «Хыпар» чăваша вĕренме чăрмантаракан çынсене, чăваш пупĕсен консервациленнĕ, хытса ларнă пĕр пайне кăна сивлет. Хаçат редакцийĕ ячĕпе Алексей Милли пурне те – пуяннине те, чухăннине те – вĕренме чĕнсе калать: «Çав малалла каяс çулпа ертекенни пирĕн питĕ шанчăклă! Çав ертекенни вăл – *чăвашсен харсăрлăхĕ, ĕçченлĕхĕ,*

*чăвашсен хастарлăхě, ăсě.* Вěренěр, чăвашсем! Пиртен тěлěнмелле халăх пулса тăрасси курăнса тăрать» (Хыпар. 1917. 23 №) (Родионов 2008:)

Çак наци юхăмěн чи пысăк çитěнěвě тесе Раççейри Аслă Пухăва (Учредительное собрание) Хусан кěпěрнинче суйламалли списока чăвашсем хăйсен номерěпе (1 №) тухма пултарнине шутламалла. Çав списока ун чухне Чăваш Халăхěн хучě (Чувашский Национальный список) тенě, унта 7 чăваш кěнě: Г.Алюнов, Патшалăхри Хура Халăх Канашěн пайташě; И.Васильев, Мускаври çěр виçевçисен институтěнче вěренекен; С.Николаев, Шупашкарти мировой тӳре (судья); А.Краснов, Хусанти Чăваш салтакěсен ушкăнěн пуçлăхě; И.Сергеев, Шупашкар уесěн çěрěç (земство) тăвамěн пуçлăхě; Д.Петров (Юман Мěтри), Чěмпěр кěпěрнинчи хресченсен канашěн пуçлăхě; С.Павлов, Хусан кěпěрнин çěрěç тăвамěн пайташě, Хусан университетěнче вěренекен. Суйлав хыççăн Аслă Пухăва 4 чăваш кěни паллă пулать.

1917 çулхи юпа уйăхěнче пулнă пăлхавăр (революци) хыççăн халăх чăмăртанăвне хирěçле ěçсем пулса иртеççě. Г.Алюнов Чăваш Халăх Ушкăнěпе «Хыпара» сылтăмалла туртса каять, çěнě влаçа хирěç тăрать. Ку тěлěшрен Юман Мěтри чăваш ěçне влаçпа хирěçмесěр, çураçăнса туса пырас çул çине тăни паллă. Вăл чăваш халăхěн ыйтăвěсене мала лартать, совет влаçě чăвашăн пěртен-пěр хаçатне хупса лартасран асăрханас тěллевпе «Хыпар» хаçата сылтăм эсерсенчен туртса илсе «Канаш» ятпа кăларма пуçлать. 1918 çулхи нарăсăн 28-мěшěнче унăн пěрремěш номерě тухать. Ака уйăхěнче хаçата Чăваш тěп Канашěпе сулахай социалистсен Комитечě кăларма пуçлать.

Наци юхăмěн пěрлěхне хытах хавшатакан сăлтавсен шутне шурă чехсен 1918 çулхи çу уйăхěнчи пăлхавне кěртмелле. Вěсем Самар хулине туртса илнě хыççăн эсерсем советсене хирěçле влаç (Комуч) туса хураççě, халăх çарне йěркелеççě. Çав çар çурла уйăхěнче Хусана туртса илсен Г.Алюнов тепěр хут «Хыпар» кăларма пуçлать, хěрлисем таврăннă чухне шуррисемпе тухса тарать. М.Юман та, И.Васильевпа С.Николаев та Комучпа пěрлешеççě. Çапла вěçленет пěтěм чăваш халăхě Аслă Пухăва суйланă çынсен политикăри пурнăçě. Тěрěссипе влаçпа хирěçěве кěрсе вěсем хăйсем сисмесěрех Н.Никольскипе унăн юлташěсем йěркелесе çитернě наци идейине те, чăвашлăха та хирěçле ěçсем тунă. 1917 çулхи кěркунне чăмăртанса çитнě наци юхăмěн пěрлěхě большевиксен пăлхавăрне, влаçа вăйпа туртса илнине пула пуçěпех арканса каять. Большевиксен 1918 çулхи авăн уйăхěн 5-мěшěнче «Хěрлě террор» декречě тухнă хыççăн влаçпа килěшменнисене судсăр-мěнсěрех персе пăрахма, тěрмесене лартма пуçлаççě. Шуррисемпе кайнă Комуч майлисене тата ытти чăвашсене арестлемелли хушу тухать. Унта Г.Комиссарова та тытса хупма хушни пулнă. Лешě шуррисемпе çыхăнман пулсан та влаçрисене вăл çырнисем килěшмен. 1918 çулхи çурла уйăхěн 1-мěшěнче «Заволжский летописец» журналта (10 №) Г.Комиссаров революционерсене халăха пăлхатнăшăн хытах айăпланă, чи малтан большевиксене.

Унта вăл чăваш интеллигенцийěн 1917 çулхи кěркунне пулса иртнě чăмăртанăвне тепěр хут тавăрасшăн çунни палăрать. Шел пулин те, унăн ěмěчě пурнăçланма пултараймасть. Кěçех граждан вăрçи анлăран анлă сарăлса каять, тăван тăвана, чăваш чăваша касма пуçлать. Хăйěн пěр çырăвěнче Д.Элмен çапла аса илни пур: «Чăваш коммунисчěсен хушшинче икě ушкăна пайланса кайни область йěркеленě чухнех палăрчě: пěрисем большевиксен çулне-йěрне çирěппěн тытса пычěç, теприсем чăваш националисчěсен, интеллигенцийěпе кулакěсен кăмăлěсене çырлахтарма тăрăшрěç» (Родионов 2008: 14).

Çыру авторĕ «большевикла тĕрĕслĕх» тенине чи малтан тĕп комитет йышăнăвĕсене пурнăçа кĕртсе пынă, çӳлтен хушнине яланах итленĕ тесе ăнланмалла: «Ревком тата облĕçтăвком, обком ертсе пынипе тĕп влаç директивисене пурнăçа çирĕппĕн кĕртсе пычĕ» (Родионов 2008: 14).

Иккĕмĕш ушкăнрисем чи малтан парти директивисене мар, халăх интересĕсене хӳтĕленĕ, центр хушнисене лешĕсем пек хыпăнса ӳксе пурнăçламан иккен. Çав çулсенче Сталин, партин тĕп секретарĕ пулнăскер, влаçа хăйĕн аллине ытлараха та ытларах ярса илсе пынă. Çакă Чăваш облаçĕнче те сисĕннĕ. Чи малтанах центр хушнипе Элмен ревкома (унăн автономи облаçĕ йĕркелемелле пулнă) большевиксен партийĕн обкомĕнче тăракансене кăна кĕртет, чăваш коммунисчĕсем сĕннĕ Г.Савандеевпа Ф.Сергеева пăрса хăварать. Сталин аппаратĕнчисем çак ĕçе (авторитарлă влаç туса хунине) ырласа йышăннă.

Элмен ертсе пынипе Чăваш автономи облаçĕ Мускавран ярса панă продразверстка планне (халăхран тырă вăйпа пухас ĕçе) 136 процент тултарать. Влаçа хытă тарăхнă чăваш хресченĕсем пăлхав çĕклеççĕ, тырă пухакансене хăвалаççĕ, хĕнесе пĕтереççĕ. 1921 çулхи пуш уйăхĕнче обком секретарьне Элмен вырăнне Г.Савандеева лартаççĕ. Çав выçлăх çулта Элменпе унăн хăш-пĕр тусĕсем тутă Çĕпĕре тухса тараççĕ. Облаçри влаç обкомран облаçри советсен ĕçтăвкомĕн аллине куçать. Унăн председателĕ С.Коричев тата обком секретарĕ Г.Савандеев пĕр шухăшлă пулни сисĕнет.

Сталин аппарачĕ влаçа парти обкомне тавăрса парасшăн пулнипе Элмене Çĕпĕртен каялла чĕнсе илет те ăна каллех секретаре ларма пулăшать. Хирĕçӳсем çĕнĕрен пуçланса каяççĕ. Парти обкомĕн секретарĕ советсене хăйне пăхăнтарттарасшăн, С.Коричевпа унăн майлисене хĕстерет, ĕçрен кăларса ярать. Çав хирĕçӳре Коричев Чĕмпĕр чăвашĕсем (Савандеев, И.Лукьянов тухтăр, Юман Мĕтри) çине таяннă, хăйсен тĕрекĕ пуласса шанса Чĕмпĕртен А.Миллине чĕнсе илет (1922 çулхи пуш уйăхĕнче). Центр пулăшнипе Элмен ушкăнĕ вăй илсех пырать, Шупашкартан 1923 çулта А.Миллин, тепĕр çулне Юман Мĕтрин тухса кайма тивет. Кĕçех Элмене хăйне те секретарь ĕçĕнчен кăлараççĕ. Тарăн тымар яма ĕлкĕрнĕ хирĕçӳ 20-мĕш çулсен вĕçĕнче те аванах сисĕнет-ха. Ку тапхăрта Элмене хăйне те айăплаççĕ ĕнтĕ. Сталин парти аппаратне çине-çинех çĕнетсе тăни, çĕнĕрен ларнисене малтанхисемпе хирĕçтерме тăрăшни çыравçăсен хушшинчи ушкăнланусене вăй илме чылай пулăшать.

Элменпе Савандеев (Коричев) хушшинчи хирĕçӳсем 1918 çултах пуçланнă. Чăваш хресченĕсемпе ĕçлекенĕсен çĕртме уйăхĕнчи тĕп пухăвĕнче «Чăвашăн Тĕп Комиссариачĕпе унăн пайĕсем çинчен» ятлă докладпа харăсах икĕ çын калаçнă - Д.Петров (Юман Мĕтри) тата Д.Элмен. Пĕрремĕшĕ асăннă органăн чăваш ĕçĕшĕн тăрăшмалла тенĕ, иккĕмĕшĕ вара унăн пĕлтерĕшне Мускавран янă хушусене пурнăçласа пынинче кăна курнă.

Юман Мĕтри шуррисемпе кайни Элменшĕн ал май пулса тăрать. Вăл чăваш хушшинче культура автономийĕ е республика мар, *ĕç коммуни* йĕркелеме тĕв тăвать. Ревком йышне хăйĕн çыннисене кĕртни ăна хăйĕн ĕмĕтне пурнăçлама май парать: Чăваш облăçне Чĕмпĕр тăрăхĕнчи чăваш çĕрĕсем кĕреймеççĕ. Çав тăрăхра çуралса çитĕннисене «внеобластниксем» тесе влаç тытăмĕнчен тĕрлĕ майпа пăрма пуçăнаççĕ. «Вĕсем (Коричев, Михайлов тата Юман Мĕтри. – *В.Р.*) Чăваш Республикине ертсе выракансене тулай чăвашĕсене пама тăрăшаççĕ, çапла майпа Ленин вĕрентĕвне хирĕç кайса,кульрурăлла автономи идейине пурнăçлама тапаçланаççĕ», - тесе çырнă Н.Золотов Д.Элмен патне 1926 çулта (Родионов, 2008: 15).

Ҫак влаҫшăн пынă хирĕҫӳ культурăпа литературăра вирьяллăхшăн тăрăшакан юхăма вăйлатса ярать. Яковлев шкулĕнче анатри чăвашсем пуҫ пулса тăни, литература чĕлхи те вĕсен диалектне тĕпе хурса аталанни тури чăвашсен пĕр пайне кӳрентернĕ. Вĕсем хăйсен вырăнти калаҫăвĕпе культурине хисеплени, ыттисене те хисеплеме ыйтни йĕркеллĕ япалах пулнă ĕнтĕ. Ҫав хушăрах ентешлĕх туйăмĕ вăйланни халăх чăмăртанăвне чăрмантарма пултарни те курăнсах тăнă. Элмене пăхăнса тăракан «Канаш» хаҫат (унта ытларах тури чăвашсем ĕҫленĕ) «Чухăнсен сассипе» (малтан унăн редакторĕ А.Милли пулнă), «Ҫĕнĕ пурăнăҫ» хаҫатпа (редакторĕ Г.Савандеев), «Атăл юрри» журналпа (редакторĕ А.Милли) хирĕҫкелесех тăнă. Тĕпрен илсен вĕсем чĕлхе тата культура ыйтăвĕсемпе ҫыхăннăскерсем пулнă.

1917 ҫулхи ҫу уйăхĕнчен пуҫласа А.Милли «Хыпар» хаҫатăн редакторĕнче, каярах «Канаш» сотрудникĕнче ĕҫлет. 1918 ҫулта «Чухăнсен сасси» редакторĕнче вăй хурать, пичет ĕҫне И.Ахаха, Н.Золотова тата ытти ҫамрăксене те явăҫтарать. А. Миллипе Н. Золотов хушшинчи хирĕҫӳ ҫав ҫулсенчех пуҫланнă пулас.

1920 ҫулта Чĕмпĕрте А. Милли «Атăл юрри» ятлă журнал кăларма пуҫăнать. Унăн чи малтанхи номернех тиркесе йышăнаççĕ канашçăсем. «Милли стихĕсене стихсем тесе шутламастпăр… Ивановăн «Стихсем» ятлă статйи хăй ĕмĕрнеирттерсе янă статья, вăл статья вилни чылай вăхăт пулать ĕнтĕ, - хирĕлет Лукка Эрхипĕ, унтан ҫапла пĕтĕмлетӳ тăвать: «Атăл юррин» малтанхи номерĕ чăвашла ҫыракан юлташсене йăнăш ҫул ҫинелле туртать, ăна тӳрлетме редакци коллегине ҫĕнетмесĕр пулмасть пулĕ» (Канаш. 1921. 2 №) (Родионов, 2008: 16). Ҫавăнтах Ютăн (Н. Золотовăн хушма ячĕ) А. Миллине ятласа ҫырнă статйи («Чăваш чĕлхин паттăрĕсем») те пур. Вăл «Атăл юррине» тĕрĕс ҫул ҫине тухма чĕнет.

Мĕнле ҫул ҫине тăнă-ши ҫав Чĕмпĕрти чăвашла ҫыракансен ушкăнĕн (вăл 1920 ҫулхи ҫу уйăхĕн 31-мĕш кунĕнче уҫăлнă) журналĕ? Ҫакна унăн редакторĕн «Чăвашла ҫыракансен ушкăнĕ мĕншĕн кирлĕ» ятлă статйине вуласа пĕлме пулать. Малалла автор чăн-чăн илемлĕ литература, тĕнче классикине ҫитме пултаракан илемлĕ хайлавсем тăван литературăра питех те сахалли, чăвашла ытларах тĕн кĕнекисем кăна пичетленсе пыни ҫинчен калать. Унтан вăл ушкăнăн тĕп тĕллевĕсене палăртать. Вĕсем ҫаксем иккен:

1. Чăваш халăхĕн ĕҫлĕ ҫыннисене Европăри вĕреннĕ халăхсен ушкăнне кĕртес тесен, вĕсене хăйсен чĕлхипе илемлĕ, ăнланмалла сăмахсемпе тĕнчери этемлĕхĕн пурте йышăнмалли шухăшĕсене йышăнтармалла. Ăна чăваш халăхĕн пултарса ҫыраканĕсем пĕрлешсе тусан анчах тума пулать.

2. Чăваш халăхĕн юррисемпе халапĕсене пуҫтармалла.

3. Чăвашсен илемлĕ литературине (пултаруллă ҫырулăхне) араслантарасшăн ҫине тăрса ĕҫлемелле.

4. Чăваш халăхĕ хушшинче хастарлă ҫыракансем курăнсанах, вĕсене пур енчен те пулăшу парса тăмалла.

5. Чăвашла пултарса ҫыракансен чăваш ялĕсене тăтăшах кайса, чăвашăн илемлĕ литератури ҫинчен калаҫмалла.

6. Ют халăхсен чаплă ҫыраканĕсен пултарăвĕсене чăвашла куҫармалла. Пуринчен малтан чухăн халăхăн асапĕсене кăтартса ҫырнисене куҫарарах парас пулать.

7. Чăвашла эрешлесе (илемлетсе) çырмаллин йĕркисене чăваш халăхĕн юрри-халапĕсене вĕреннинчен кăларса майлаштармалла.

Илемлĕ литература хаçат вĕççĕн кăна аталанма пултарайманнине асăрхаттарать А.Милли, ăна журнал-кĕнеке кăларни питех те кирлĕ пулнине аса илтерет. Кунта чĕлхен халăхлăхĕ, унăн тасалăхĕшĕн тăрăшмалли пирки шухăшлани пур. «Эпир те, чăвашсем, хамăр камне пĕлнинчен пуçласан тин культурлă халăх пулăпăр», - тесе пĕтĕмлетет çыравçă (Родионов 2008: 17).

«Атăл юрри» пĕтĕмĕшле ырă сунуллă, никама та хурламасть. «Хĕрлĕ Урал» хаçат та çавнашкал кăмăллă. Çав хушăрах мĕнпур хирĕçӳллĕ ыйтусене «Канашра» хускатаççĕ, хăшĕ-пĕрне область тулашĕнчи чăвашсем хăйсен сассине пани килĕшмест. Ку тĕлĕшрен уйрăмах Ют хастар. «Стаканри шывра çил-тăвăл кашлать» статьяра (Канаш. 1921. 10 №) вăл Миллипе Вантере каллех тустарса илет. Унăн 37-мĕш номерте пичетленнĕ «Чуралăх «пылакĕпе» ирĕклĕх сиенĕ» стайинче вирьял чăвашĕсене анатрисемпе хирĕçлетсе кăтартнă. «Хальхи хăйсене анатри текен чăвашсем хăйсен аслашшĕсен аваллăхне хăйсене тутар сăнĕ çĕнтерсе пынă майĕпе калаçăва улăштараççĕ, мăкшă сăнĕ çĕнтерсе пынă майĕпе тумтирне улăштараççĕ» - тиркештерет вăл чăваш халăхĕн пĕр пайне тата унăн культурине. Çавна май автор хăй çуралса çитĕннĕ тăрăха мухтаса илет. Çак енчен вирьял чăвашĕсем телейлĕрех. Вĕсен шурă тумĕ чăвашсен аваллăхĕ çинчен асăнтарать иккен. Вирьял чăвашĕсен калаçăвĕ каллех анатрисен пек тутар калаçăвĕпе хутшăнасси çинчен шухăшламасть иккен. Анатри чăвашсен йăлисене, пурнăçне вĕренсе çитнĕ Рекеев анатри чăваш чĕлхи тутарсен енне сулăнни çинчен аса илтерет автор. Анатри чăвашсен калаçăвĕнче чăваш чĕлхин тасалăхĕ çухалса пырать-мĕн. Ютăн (Золотовăн) пĕтĕмлетĕвĕ çапларах: «Вирьял чăвашĕсем çак енчен таса, вĕсем вырăса тухасси çинчен те, çармăссем еннелле пăрăнасси çинчен те шухăшламан. Вĕсен чĕлхинче авалхи чăвашсен уçă, çăвар туллин тухакан сасă илтĕнет» (Родионов 2008: 17).

64-мĕш номерте Н. Золотов татах та хаярланни сисĕнет. Унта вăл хаçата вуламаççĕ текенсене çапла вăрçать: «Çапкаланчăксем, чăваш чĕлхине висĕ пуслăх та пĕлеймеççĕ, çапах та вĕсем Крыловăн юптарса каланинчи ашак пек, революци тунă майсене тиркеме (критиклеме) пăхаççĕ. Вĕсем пурте: «Канаш» чăваш чĕлхине пăсать. Унта ютран кĕрекен сăмахсене чăмласа, урăхлатса пĕтереççĕ, вуламалли те çук, теççĕ. «Канаш» чĕлхипе ĕлĕк куçарнă евангели чĕлхи хушшинче тĕпсĕр çыран выртать. Евангели чĕлхи яп-яка, «Канаш» чĕлхи тикĕс мар, теççĕ... Çапкаланчăксемшĕн евангели чĕлхи вутран та хăватлă» (Родионов 2008: 18).

Кунта автор чĕлхе тавне идеологи юхăмне кĕртсе яма, çавна май турă кĕнекисенче çирĕпленсе, вăй илсе пынă литература чĕлхине сивлеме тăрăшни сисĕнет. Вăл çулсенче чиркӳсене вăйпа хупма, ĕненекенсене хĕстерме пуçлани паллă ĕнтĕ. Чĕлхе тавне пуçараканĕсем Яковлев ĕçне сивлени, чăваш культурине икке пайласа ярас çул çине тăни халăхăмăр чăмăртанăвне чылаях чăрмантарма пултарнă. «Атăл юрри» пĕтĕмпех Пăва чĕлхипе çырнă, çавăнпа ăна Чикме чăвашĕсем, Етĕрне чăвашĕсем юратсах каяс çук, - чĕлхе тавĕ пирки шухăшласа çырать Ванеркке. Малалла теприсен куçĕпе пăхса çапла калать: «Канаш» чĕлхи те, брошюрăсен чĕлхи те çавăн пекех: пĕриншĕн лайăх, теприншĕн ниме те юрăхлă мар» (Канаш. 1922. 21 №) (Родионов 2008: 18).

Çавăн йышши хирĕçӳ çармăссен (марисен) те пынă. Ту çи çармăссем улăх çармăссен калаçăвне тĕпе хунă литература чĕлхине йышăнасшăн мар пулса облаç тĕп хулине Чикмене куçарасшăн тапаçланаççĕ. Вĕсем хăйсен калаçăвĕпе кĕнекесем, хаçат кăлараççĕ. Çав хирĕçӳ тарăна кайни икĕ литература чĕлхи тăвасси патне илсе çитерет. Ирçепе мăкшăсен те çавах. Вĕсем пĕр-пĕрне

ăнланманран (уйрăм литература чĕлхисем йĕркелени чăвашсене те икĕ ушкăна уйăрса янă пулĕччĕ) хутшăннă чухне вырăсла калаçаççĕ. Акă мĕн патне илсе çитерме пултарать халăх чăмăртанăвне хирĕç тăракан «хамăр ял» патриотизмĕ!

Ун чухне çав ерекен «чирпе» хăш-пĕр çыравçă чылай асапланнă, çапах та вăл хăвăртах иртсе кайнă. Çак «хамăр яллăх» туртăмне интеллигенцин тĕп пайĕ пачах йышăнман. Енчен те вирьял чăвашĕсен срездне (вăл 1917 çулта Элĕкре пуçтарăнмалла пулнă) Г.Комиссаровпа Ф.Павлов малтан ырланă пулсассăн, каярах вĕсем чăвашăн çак «хамăр яллăх» чирĕнчен сывалнă, пĕтĕм халăхăмăра чăмăртасшăн çунма пуçланă. Ахальтен мар ĕнтĕ Г.Комиссаров тавлашусене Н.Золотовпа Н.Шупуççынни пек «хамăр яллăха» шута илсе хутшăнмасть, ун пек чухне вăл наци интересĕсене маларах лартать.

Чăваш литературинче авторитарлă шухăшлав çирĕпленсе çитни Д.Элмен тата Н.Золотов хăйсен оппоненчĕсене 1923-1924 çулсенче пуçĕпех çапса çĕмĕрнипе тачă çыхăннă. Çавăн пиркиех С.Коричевăн та, А.Миллипе М.Юманăн та Шупашкартан пуçĕпех тухса кайма тивет.

Ушкăнлăх, авторитарлăх 20-мĕш çулсен вĕçнелле татах та вăйланса пырать. Халĕ ĕнтĕ çĕнĕ ӳсĕм (С.Петров, И.Кузнецов т. ыт.те) Д.Элмен ушкăнне аркатать, Мускавра А.Милли, С.Коричев, Юман йĕркеленĕ культура обществине салатать. 1930-1936 çулсенче çыравçăсене пĕр-пĕринпе хирĕçтерсе яраççĕ, вĕсем çине тĕрлĕ ярлăк çакса тултараççĕ. 1937 çулхи репрессие вара пурте – малтанхи ӳсĕмĕн икĕ ушкăнĕ те, çамрăккисем те – тивĕçеççĕ. Хăрушă самана тапранса каять… Çак синкерлĕ пăтăрмахсем пĕтĕмпех большевиксен пăлхавăрĕ хыççăн пуçланаççĕ. Класс кĕрешĕвĕн ячĕпе витĕнсе Раççейри пур халăха та пайласа-хирĕçтерсе яраççĕ. Çав ӳкерчĕк чăваш çыравçисен хушшинче те аван курăнать.

XX ĕмĕрĕн малтанхи çирĕм çулĕнче чăваш халăхĕ чăмăртанса, цивилизацире хăйĕн вырăнне тупнă наци пулса çитет: унăн тĕрлĕ социаллă сийĕсем уйрăм партисене ушкăнланаççĕ, чăвашла хаçат-кĕнеке тухсах тăрать, наци идейи палăрса çитет. Тăван чĕлхепе шкулшăн пынă кĕрешӳ юлашкинчен наци автономийĕ, республики йĕркелесе яраси патне илсе çитерет. Çак ирĕклĕхпе пĕр танлăх çулне 1917 çулта пулса иртнĕ нарăс тата юпа уйăхĕнчи пăлхавăрсем те уçса пыма майсем туса панă.

**Литература**

Комиссаров, (Вантер) Г.И. (2014). *Суйласа илнĕ хайлавсем. Пĕрремĕш кĕнеке*. Шупашкар; Çĕнĕ вăхăт. 246 с.

Родионов, В.Г. (2008). *Чăваш литератури. 1917-1930-мĕш çулсем*. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви. 430 с.

Родионов, В.Г. (2017). *Чувашский этнос: исследования по этнологии и мифопоэтике.* Чебоксары: Чувашский государственный институт гуманитарных наук. 324 с.

Юман, Мĕтри (1997). *Суйласа илнисем*. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви. 543 с.